# Пуян пирĕн чĕлхе

Пухусенче, конференцисенче тухса калаçакан делегатсенчен ытларахăшĕ чăвашсен шучĕ чакса пыни пирки пăшăрханать. Чăнахах та чăвашсем 100 пин ытларах пурăнакан хутлăхсене илер-ха. Чăвашсен шучĕ чи нумай чакни – Самар облаçĕ. 1989-2002 çулсенче унта 117900 ытларах чăвашран 101400-е яхăн çеç юлнă. Çапла вара çак вăхăтра 16500 çын чакнă. Ку вăл 14,5 процентпа танлашать. Ăçта кайнă вĕсем? Паллах, пурте вилсе пĕтмен, вырăсланнă, хăйсене вырăс тесе çыртарнă. 101400 чăвашран та 45 проценчĕ тăван чĕлхе вырăнне вырăс чĕлхи кăтартнă. 1970 çулта Тутар Республикинче 150 пин ытларах чăваш пурăннă пулсан 1989 çул тĕлне – 134,2 пин, 2002 çулта 126,5 пин чăваш пулни паллă. 13 çулта 7,7 пин чăваш чакнă /5,8%/. Ульяновск облаçĕнче 116,5 /1989 çул/ чăвашран 113,3 пин /2002 çул тĕлне/ çеç юлнă. Чăвашсен шучĕ чи сахал чакни – Пушкăрт Республики. 1989 çул тĕлне 118,5 пин чăваш пурăннă пулсан 2002 çул тĕлне 117,3 пин çын юлнă /1 процент чакнă/. Чăваш Республикинче вара 2 процент чакнă. 2010 çулхи çырав кăтартăвĕсем те савăнтармаççĕ.

ЧНК Аслă пухăвĕсенче, конференцисенче тухса калакан, чăвашлăхшăн тăрăшнă пек кăтартакансен, хулара е район центрĕнче пурăнакансен ачисем вырăсланса ӳсеççĕ. Вĕсемех чăвашсен шучĕ сахалланса пынишĕн пăшăрханаççĕ тĕк, мĕншĕн хăйсен ачисемпе вырăсла калаçаççĕ? Самар облаçĕнчи чăвашсен «Пехил» пĕрлĕх ертӳçин В.Д.Калмыковăн та, Тольяттири чăваш наци культура автономийĕн ертӳçин А.П.Глуховăн та, Тутарстанри Анат Камăри чăваш гимназийĕн директорĕнче нумай çул вăй хунă А.П.Гавриловăн та ачисем чăвашла пĕлмеççĕ.

Чăвашсен шучĕ чакса пынин сăлтавĕсенчен пĕри – 1956 çулта Чăваш Республики тулашĕнчи чăваш педучилищисене хупни /5 педучилище/. Çакăн хыççăн шкулсенче вырăсла кăна вĕрентме тытăнчĕç. Ашшĕ-амăшĕ хăйсен ачисемпе вырăсла кăна калаçать, мероприятисем вырăсла çеç иртеççĕ.

Пĕррехинче Самар хутлăхĕнче чечен çыннипе паллашнăччĕ. Вăл мана çавăн пек каланăччĕ: «Пирĕн çирĕп йăла: хамăрăн несĕлсене 7 сыпăкран кая мар пĕлмелле, вĕсен чĕлхине упрамалла. Енчен те çаксене пурнăçлаймасан эсĕ чечен мар, сана нимĕнле хисеп те пулмасть».

Самарта, Тольяттире чăваш ансамблĕсем лайăх ĕçленине асăнса хăвармалла. Юрлакансем чăваш юррисене юратса шăрантараççĕ. Пĕлес килет: вĕсем тата килĕсенче ачисемпе хăш чĕлхепе калаçаççĕ-ши?

Эпĕ Иван Егоров çыравçă-прозаик патĕнче пĕрре мар пулнă. Унăн мăшăрĕ вырăс. Вĕсен ывăлĕ Павел амăшĕпе – вырăсла, ашшĕпе чăвашла пуплет. Çапла пулмалла та. Хутăш çемьерен тĕк, ачасене ашшĕ чĕлхине те, амăшĕн чĕлхине те юратма вĕрентмелле.

Хаçатра ĕçленĕ чухне чăваш ансамблĕнче юрлакан çамрăк хĕрарăмпа паллашма тӳр килнĕччĕ. Зина Гаврилова Иркутскра çуралнă. Ашшĕ – Антон Федоров – Мерчен ялĕнчен, амăшĕ Вартюх Кивĕ Ӳселĕнчен /Тутарстанри Аксу районĕ/. Эпĕ унăн ашшĕне те, амăшне те лайăх пĕлетĕп. Зина манăн кĕрĕвĕн иккĕмĕш сыпăкри йăмăкĕ иккен. Антунпа Вартюх вунă ача çуратса ӳстернĕ. Вартюх сасси лайăхчĕ. Вăл çамрăк чухнех юрлама юрататчĕ. Антун вилни вара пайтах пулать. Вăл вăрçă инваличĕччĕ.

– Самара килсен эпĕ малтан вырăс хорне çӳреттĕм. Чăвашсен пултарулăх ушкăнĕ йĕркеленсен унта çул тытрăм. Тăван чĕлхепе калаçма йывăрччĕ, майĕпен хăнăхрăм, – тенĕччĕ Зинаида Антоновна. – Эсĕ манпа вырăссен хушшинче те чăвашлах сăмахла, – тĕлĕнтерчĕ вăл мана.

Шел, чăваш ялĕсенчи шкулсенчех нумайăшĕнче чăваш чĕлхи урокĕсем çук. Акă Мăкшелĕнчи /Аксу районĕ, ТР/ шкулта чăваш чĕлхине вĕрентмеççĕ. Ялта пурăнакансен 70-75 проценчĕ – чăваш. Эпĕ çав шкулта 7 класс таран пур предмета та чăвашла вĕреннĕ. 1956 çулта В.Ф.Тарасов шкул директорĕ районта чи малтан вырăсла кăна вĕрентме тытăннипе чапа тухнăччĕ. Манăн ачасем те малтан çав шкулта ăс пухатчĕç. Министерствăна çырса янă хыççăн тин чăваш чĕлхи урокĕсене каялла тавăрчĕç. Çавна пула РОНО, ялти пуçлăхсем умĕнче «националист» пулса тăтăм. Эпĕ районтан тухса кайсан шкулта чăваш чĕлхи урокĕсене пĕтернĕ.

■ **Виктор СИМАКОВ.**

Тутарстан, Аксу районĕ